28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1945 ДЕКАБРЬ 28 ЭРНЕКУН 252 (7003) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Совет çамрăкĕсем суйлав кампанийĕнче

Совет халăхĕ хăйĕн çамрăкĕсемпе тивĕçлипех мухтанма пултарать. Социализм çĕршывĕнчи хăюллă та идейăллă, Тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн парăнса тăракан çамрăк ăру хамăр халăхăн историне геройла страницăсем сахал мар çырса кĕртрĕ. Комсомолец-воинсенчен виçĕ миллион çурă çынна ытла Отечественнăй аслă вăрçăра паттăр ĕçсем тунăшăн боевой орденсемпе медальсем парса наградланă. Виçĕ пин комсомолец çапçура паттăрлăхпа хастарлăх кăтартнăшăн чи пысăк награда—Совет Союз Геройĕн ятне илме тивĕçлĕ пулнă. Çамрăксен пĕр миллион çынран ытла тăракан 150.000 ытла бригади заводсемпе шахтăсенче вăйа хĕрхенмесĕр ĕçленĕ, тăшмана çапса аркатма Хĕрлĕ Çара хастарлăн пулăшса тăнă. Ялти çамрăксем, хĕрарăмсемпе пĕрле, колхоз производствин тĕп йывăрлăхне хăйсен хулпуççийĕсем çинче тÿссе ирттерчĕç. Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче Ленин—Сталин партийĕ пирĕн умма совет халăхĕн çĕнтерĕвĕсене хавхалантараканĕ тата организацилекенĕ пулса тухса тăчĕ, ленинла-сталинла комсомол вара хăйне партин ывăнма пĕлми, шанчăклă помощникĕ пулнине кăтартса пачĕ.

Социализм строительствин пур ĕçĕсенче те совет çамрăкĕсем хăйсен практикăллă ĕçĕсемпе Тăван çĕршыва, большевиксен партине, халăхсен аслă çулпуçне Сталин юлташа пĕтĕм чун-чĕререн парăнса тăнине кăтартса пачĕç. Çĕршывăн мĕнпур политикăллă пурнăçĕнче çамрăксем пысăк та паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Халĕ СССР Верховный Советне суйлас кампанире те вăл çав вырăнах йышăнса тăрать.

Ниçта та, тĕнчери пĕр çĕршывра та çамрăксем Совет Союзĕнчи пек правăсемпе усă кураймаççĕ. Кашни 18 çула çитнĕ арçын ача е хĕрача, урăхла каласан, çитĕнсе çитнĕ çын, пирĕн государство влаçĕн аслă органне суйлас ĕçе хутшăнма пултарать. СССР Верховный Советне суйлама çак çитес суйлавра сакăр çул хушшинчи çамрăксем малтанхи хут хутшăнаççĕ. 1937 çулта, малтанхи суйлав пулнă чухне, хальхи суйлавçăсенчен нумайĕшĕсем çитĕнмен çамрăксем е пачах та ачасем пулнă. Вĕсене Сталинла Конституципе, суйлав законĕпе тĕплĕн паллаштармалла, вĕсене советлă социализмлă государство гражданĕсен прависемпе обязанноçĕсем çинчен ăнлантарса памалла. Çакăнта ĕнтĕ комсомолăн хуларти тата ялти организацийĕсен тĕп ĕçĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Совет çамрăкĕсем вăрçă тĕрĕслевĕ пынă çулсенче хăйсен политикăллă пысăк ăнланулăхне, Тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн юратнине кăтартса пачĕç. Çакă вăл—никам сирсе ярайми факт. Анчах çакă вăл пĕрре те çамрăк суйлавçăсем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕç туса пыма кирлĕ маррине, вĕсем суйлава хăйсем тĕллĕнех активлăн хутшăнма пултарассине пĕлтермест-ха. Пачах та урăхла, комсомол организацийĕсен пĕрремĕш тивĕçĕ—агитацине пропаганда ĕçне май килнĕ таран анлăнрах сарса ярасси, кашни çамрăк суйлавçăпа тĕл пулса тĕплĕн калаçасси пулса тăрать. Пирĕн пурнăçри пĕрре пăхсан нимех те пĕлтермен пек курăнакан кулленхи фактсемех агитаторсене çав тери пуян материал параççĕ. Çав материалпа пĕлсе усă курсан, вăл çамрăксене совет халăхĕ Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе тунă пĕтĕм тĕнчипе палăрса тăракан историллĕ çĕнтерÿсен пĕлтерĕшне тарăнрах ăнланса илме пулăшать. Сăмахран, Конституцин СССР гражданĕсен ĕç прави, вĕренмелли, канмалли право пурри çинчен е çĕре колхозсен аллине ĕмĕрлĕхех çирĕплетсе парасси çинчен калакан статьисене илсе пăхар-ха. Çав статьясене çамрăксене çывăх тăракан фактсемпе ăнлантарса парсан, эпир вĕсен агитациллĕ пысăк вăй пуррине куратпăр.

Акă пурнăçран пĕр пример илсе пăхар. Мускав çывăхĕнчи Кривандино районĕнчи Бордуково ялĕнче агитатор Сталинла Конституци çинчен калаçу ирттернĕ. Калаçу кал-каллăн та активлăн пынă. Унта хутшăннă кашни çын хăйĕн шухăшĕсене кăмăлласах каласа панă. Ыттисемпе пĕрлех ватă колхозник Матвей Иванович Лашков та тухса каланă. Вăл каланисем пуриншĕн те çав тери паллă пек, анчах çав паллă япалана çамрăксем хушшинче суйлав умĕнхи агитаци ĕçне туса пыракан çынсен манма юрамасть.

«Эпир, ваттисем те,—тенĕ вăл,—майĕпе ĕлĕкхине манса пыратпăр. Анчах пурнăçра пулса иртнĕ аслă улшăнусене пĕтĕм чунтан, вĕçне çитиех туйса илес тесен, ĕлĕкхи çинчен пирĕн час-часах аса илме, ытларах калаçма кирлĕ...»

Старик вара хăйсен ялĕн революцичченхи пурнăçĕ çинчен, çав тери асаплă пурнăç çинчен, тĕттĕмлĕх çинчен, кулак пусмăрĕ çинчен, тырпул питĕ япăх пулни çинчен тата çĕр пĕрер саплăк пек кăна тивĕçни çинчен каласа панă. Кашни вара хăй ăсĕнче ĕлĕкхине хальхипе танлаштарса пăхнă. Халĕ çав ялти колхозра кашни çын пуçне обществăллă çĕрсем кăна революциччен пулнă вăтам çĕр тÿпинчен 5 хут ытларах тивеççĕ. Тырпул тухăçлăхĕ виçĕ хут ÿснĕ. Колхозра электричество çунать. Хут пĕлмен çынсене ваттисем хушшинче те тупма çук. Совет влаçĕ вăхăтĕнче çуралнă çамрăксем пурте тенĕ пекех вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă.

Пурнăçри простой пример çеç, анчах мĕн тери вăл куçа курăнакан тата ĕнентерекен пример! Совет влаçĕ пирĕн çамрăксене çав тери ырă пурнăç прависем пани çинчен, çавăн пек пурнăç прависем пирки чикĕ леш енчи çамрăксем ĕмĕтленме кăна пултарни çинчен калакан шухăша çак çÿлте кăтартнă пример çав тери ăнланмалла туса хурать. Совет гражданинĕ мĕнле правăсемпе усă курнине, çав правăсене Сталинла Конституцире çирĕплетсе панине ытларах пурнăçран илнĕ примерсемпе, фактсемпе кăтартса памалла,—акă мĕн кирлĕ ĕнтĕ çамрăксем хушшинче агитаци ĕçне туса пынă чухне.

Пирĕн мĕнпур агитаципе пропаганда ĕçĕ пекех, çамрăксем хушшинчи суйлав умĕнхи агитаци те нумай тĕрлĕ майсемпе усă курма тивĕçлĕ. Халлĕхе хăшпĕр вырăнта тĕл пулакан шаблонпа казенщинăна текех тÿсме çук! Çамрăк суйлавçăсемпе ĕçлекен агитатор çамрăксем политикăпа культура тĕлĕшĕнчен мĕнле виçере тăнине, вĕсем мĕн ыйтнине, вĕсем мĕнле пурăннине шута илме тивĕçлĕ. Агитатор çамрăксен вĕрентекенĕ те, вĕсене канаш параканĕ те пулмалла. Тепĕр чухне çамрăк çынна унăн квалификацине ÿстерме, общежитире йĕрке тума пулăшмалла, ăна кĕнекене юратма вĕрентмелле, производствăпа культура тĕлĕшĕнчен ÿсме пулăшмалла. Çаксем вĕсем — кулленхи ĕçсем, анчах вĕсенчен агитатор пăрăнса кайма пултараймасть. Агитатора çамрăксем хушшинче ĕçлеме партипе комсомол шаннă.

Комсомол организацийĕсен задачи—çамрăксен политикăллă пысăк активлăхне суйлав умĕнхи конкретлă ĕçсене кĕртсе пырасси пулать. Çамрăксене суйлавçăсен списокĕсене туса хатĕрлес тата тĕрĕслес ĕçе, агитпунктсемпе участоксене йĕркелес, участоксенчи суйлав комиссийĕсемпе округсенчи комиссисем хушшинчи çыхăнăва йĕркелес ĕçе явăçтармалла, совет çамрăкĕсен ĕçри çĕнĕ çĕкленĕвне тăтăшах пуçарса ертсе пымалла. Нумай примерсенчен пĕрине Мускав хулинчи Красная Пресня районĕнчи комсомол организацине илсе кăтартмалла. Кунта 500 çамрăк çын ытла—Мускаври государство университечĕн, юридически институтăн, консерваторипе ытти тĕрлĕ аслă шкулсен учителĕсемпе студенчĕсем суйлавçăсен списокĕсене тăвас тата тĕрĕслес ĕçе хутшăннă.

Ялти комсомол умне ответлă задачăсем тухса тăнă. Нумай колхозсенче парти организацийĕсем çук, комсомол организацийĕсем кăна ĕçлеççĕ. Паллах, çав колхозсенче вĕсем халăх хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçĕн тĕп организаторĕсем пулса тăмалла. Ялти комсомолецсене хулари комсомол организацийĕсем опыт парса, кадрсем, агитаторсем, литературăпа плакатсем парса куç курăнмалли агитацин тĕрлĕ майĕсене кăтартса парса пулăшмалла.

Çамрăксем хушшинчи агитациллĕ-массăллă ĕç идея тĕлĕшĕнчен çÿллĕ пусăмра пытăр тесен, çамрăксем суйлав кампанине активлăн хутшăнса ĕçлетчĕр тесен, комсомола парти енчен ертсе пырассине тĕпренех лайăхлатас пулать. Кашни парторганизацин комсомол ĕçне куллен сăнаса тăмалла. Çак пысăк ĕçе пропагандистсемпе агитаторсен чи лайăх кадрĕсене явăçтарас пулать, мĕншĕн тесен çамрăксене çирĕп совет патриочĕсем пулма, Ленин—Сталин ĕçне пĕтĕм чун-чĕререн парăнса тăма вĕрентсе, политикăллă воспитани парса пырасси — большевикăн пĕрремĕш чи хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрать!

(«Правда», декабрĕн 27-мĕшĕнчи умстатьи).

Учительсен заочнăй вĕренĕвĕ

Учительсене заочно вĕрентес ĕçе лайăхлатас шутпа СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Аслă шкул комитечĕ тата РСФСР Сутăç Халăх Комиссариачĕ заочно вĕренмелли çак срокĕсене çирĕплетнĕ: университетсен заочнăй отделенийĕсенче 6 çул вĕренмелле, пединститутсен отделенийĕсенче—5 çул, учительсен институчĕсенче—3 çул, педагогика училищинче—4 çул вĕренмелле. Вĕренÿ планĕсенче вĕренме çĕнĕрен илнĕ çынсене вĕренÿ енĕпе кăтартусем пама 30 кун тăршшĕ сесси ирттерме, вĕренÿ çулĕнче ултă экзаменран ытла мар партарма палăртса хумалла, учительсен институчĕсене вырăс чĕлхипе литература тата истори отделенийĕсене уйрăм отделенисем туса хăвармалла.

Çитес çултан пуçласа заочнăй отделенисене апрелĕн 1-мĕшĕпе июлĕн 1-мĕшĕ хушшинче илмелле. 1946 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне заочниксем валли 1.700 экземпляр учебник пичетлесе кăлармалла. Кăçал хĕллехи каникул вăхăтĕнче пединститутсемпе учительсен институчĕсен, педучилищĕсен директорĕсене заочник-учительсем валли 6—8 куплăх консультаци ирттерме хушнă. (ТАСС).

Çĕршыв СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет

Суйлав участокне хатĕрлесе ситернĕ

Шупашкарти 17-мĕш суйлав участокĕн çуртĕнче темиçе кун каярах çеç амбулатори пулнă. Амбулатори куçса пĕтичченех кунта суйлав комиссийĕн председателĕ К. А. Капранов юлташ килсе хăш пÿлĕмре мĕн-мĕн вырнаçтармаллине палăртса тухнă. Пĕр-пĕр пÿлĕмĕ пушанă хыççăн ăна шуратма, сăрлама, çуса тасатма тытăннă. Халĕ ĕнтĕ суйлав пулмалли çурта пĕтĕмпех йĕркелесе çитернĕ: çуса тасатнă, сĕтел-пукансем кÿрсе килнĕ, телефон кĕртнĕ, лампăсемпе краççын хатĕрленĕ. Суйлав çурчĕн пĕр пÿлĕмĕнче агитпункт организациленĕ, унта хаçатсем, суйлав çинчен калакан кĕнекесем илсе пынă, плакатсемпе, портретсемпе илемлетнĕ. Агитпункт ĕçне Л. А. Шупикова юлташ ертсе пырать.

Суйлав комиссийĕн членĕ М. М. Мирокьян юлташ суйлав çуртне суйлава хатĕрлес ĕçри йывăрлăхсем çинчен çапла каласа пачĕ:

— Пирĕн суйлав участокне организацилес ĕçре чылай пысăк йывăрлăхсем пулчĕç, мĕншĕн тесен пирĕн чи малтанах çурта пушатма тиврĕ, унтан вара ăна йĕркелемелле пулчĕ. Эпир вара кирлĕ япаласене пĕтĕмпех хамăр шыраса тупса, çурта хамăр вăйпа йĕркелесе çитертĕмĕр. Çурта йĕркелес тĕлĕшпе участокри суйлав комиссийĕн председателĕ Капранов юлташ уйрăмах тăрăшса ĕçлерĕ, нумай материалсене вăл хăй тупса пачĕ, юсав ĕçĕсене лайăх организацилесе йĕркелесе пычĕ.

Кунта халĕ суйлавçăсен списокĕсене туса пĕтерсе машинкăпа пичетлеме тытăннă. Çак кунсенчех вĕсене суйлав участокĕн çуртĕнче суйлавçăсене паллаштарма кăларса çакаççĕ.

— Эпир хамăра шанса панă ĕçе тÿрре кăларма тăрăшăпăр,—теççĕ участокри суйлав комиссийĕн членĕсем.

Çамрăк агитаторсем

СĔРПУ. Вискассинчи вăтам шкулти аслă классенче вĕренекенсем колхозниксен килĕсем тăрăх суйлав законне ăнлантарса çÿреççĕ. Пĕр шăматкун, уроксем пĕтнĕ хыççăн, вуннăмĕш класра вĕренекен 11 комсомолецпа шкул ачисем «Звезда» колхоза пырса кашни икшер килте суйлав законĕ çинчен калаçусем ирттерчĕç.

Макарова Маргарита вĕренекен 70 çултан иртнĕ Герасимова Феодосия патĕнче пулчĕ. Герасимова юлташăн куçĕ курмасть, унăн ывăлĕсем Хĕрлĕ Çарта. Хăй патне киле пырса çитес суйлав çинчен ăнлантарса панине вăл питĕ кăмăлларĕ.

— Хам ватă, куçăмсем курмаççĕ пулсан та мана патшалăх ĕçне хутшăнтарма тăрăшнăшăн эпĕ хавас. Лашапа килсе илсессĕ пулсан, суйлава каятăпах, — тет Герасимова.

П. ПАЗЛОВ.

Ĕçсыннисен депутачĕсен районри Совечĕсен сессийĕсем

ЕЛЧĔК. Ĕçсынни депутачĕсен район Совечĕн çак кунсенче пулса иртнĕ сессийĕ икĕ ыйту сÿтсе явнă: 1) СССР Верховный Совет суйлавне хатĕрленнĕ май умра тăракан задачăсем çинчен тата 2) куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине ÿстермелли майсем çинчен.

Пĕрремĕш ыйтупа ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕн председателĕ З. Осипов юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе ял Совечĕсем тунă ĕçсене çутатса пачĕ. Районра халĕ участоксенчи суйлав комиссийĕсем валли ĕç пÿлĕмĕсем тата суйлав ирттермелли çуртсем уйăрса парас, вĕсене йĕркелесе хатĕрлес ĕç пырать. Патрекел Сăрьел, Аслă Пăла Тимеш участокĕсенчи суйлав комиссийĕсем валли лайăх пÿлĕмсем уйăрнă, вĕсене кирлĕ пек илемлетнĕ. Сасăламалли вырăнсем шкулсенче пулаççĕ. Халĕ кабинăсем валли хăмасем тата фанера хатĕрлеççĕ, суйлав урнисене юсаса сăрланă, суйлавçăсен списокĕсене хатĕрленĕ.

Анчах та,—тет Осипов юлташ малалла,—суйлава хатĕрленес ĕç пур ял Совечĕсенче те çителĕклĕ пулса пырать тесе калама çук-ха. Елчĕк ял Советне кĕрекен Ĕнел суйлав участокĕнче комисси валли уйăрнă çурт ĕçлеме юрăхсăр, кăмаки ишĕлнĕ, кантăкĕсем ванчăк, пÿлĕмре таса мар. Шăмалак ял Совечĕ суйлава хатĕрленес ĕçе тивĕçлипе хаклаймасть. Участокри суйлав комиссийĕ валли кунта пÿлĕм уйăрман, суйлавçăсен списокĕсене тăвас тĕлĕшпе çынсем уйăрасси çине çиелтен пăхнă. Тĕплĕн туман списокра 21 суйлавçăн ашшĕ ятне, 40 çамрăк суйлавçăн çуралнă уйăхĕпе кунне çырмасăр хăварнă.

Осипов юлташ доклачĕ тăрăх пренире 11 çын тухса каларĕ. Патрекел ял Совет председателĕ В. Скворцов юлташ суйлава хатĕрленнĕ май колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ ÿсни çинчен каласа пачĕ. «Марс» колхоз председателĕ А. Гаязов юлташ суйлава хатĕрленнĕ май фронтовиксен çемйисене ытларах пулăшма кирли çинчен каларĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа—ĕçсыннисене куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларас ыйтупа Ф. Кузьмин юлташ докладне итлесе сÿтсе-яврĕç.

Сесси çакна палăртрĕ: вырăнти промышленность предприятийĕсемпе промкоопераци артелĕсем куллен кирлĕ таварсене туса кăларас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Райпромкомбинат, «Пахарь», «Пограничник», «III Интернационал» тата Буденный ячĕпе тăракан артельсем производство планĕсене тултараймаç. Вырăнти промышленность предприятийĕсем япăх ĕçлени çакăнтан та лайăх курăнса тăрать: 1945 çулта предприятисемпе артельсем районра пурăнакан кашни çын пуçне 23 тенкĕлĕх кăна тавар туса кăларнă. Вăл шутра 4 промартель 21 тенкĕлĕх, промкомбинатпа апат-çимĕç комбиначĕ пĕрер тенкĕлĕх туса кăларнă.

Пренире тухса каланă юлташсем предприятисемпе артельсенче ĕç дисциплинин начарри çинчен, кадрсем хатĕрлес, техникăна лайăхлатас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлени çинчен каларĕç. Сессире райсовет исполком председателĕн вырăнти промышленность енĕпе ĕçлекен заместителĕн Кузьмин юлташăн ĕçне хытă критиклерĕç.

* * *

ВĂРНАР. (Телефонпа). Кунта ĕçсынни депутачĕсен район Совечĕн черетлĕ сессийĕ пулса иртрĕ. Унта ял Совет председателĕсемпе суйлав комиссисен председателĕсем пулчĕç. Сесси СССР Верховный Совет суйлавне хатĕрленсе ирттересси çинчен сÿтсе-яврĕ. Ку ыйтупа райсовет исполкомĕн председателĕ П. Осипов юлташ доклад туса пачĕ.

Районри ĕçсыннисем суйлав кунне ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Колхозсем ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăнах çуракине хатĕрленме тытăнчĕç. Сăмахран, Киров ячĕпе тăракан колхозах илер. Кунта çуракинче акма кирлĕ вăрлăха тасатса хунă. «Майăн 1-мĕшĕ» колхозра çак кунсенчех ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтереççĕ. Район IV-мĕш кварталти финанс планне 115 процент тултарнă. Участокри суйлав комиссийĕсем ĕçе тытăннă. Уйрăмăнах Çĕнĕ Алтăшри, Уравăшри, Упнерти участоксем суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ.

Çаксемпе пĕрлех суйлава хатĕрленес ĕçри йăнăшсене те палăртса хăварас пулать. Вăрманкасри суйлав участокĕнче суйлавçăсен списокне тунă чухне суйлавçăсен хушамачĕсемпе ячĕсене тĕрĕс çырмаççĕ. Кушлавăш ял Совечĕ суйлавçăсен списокĕнче вĕсем ăçта пурăннине тĕрĕс кăтартман. Уравăш ял Совечĕ списока участок тăрăх тăвас вырăнне ялсем тăрăх туса тухнă. Вăрнар поселок Совечĕ пĕр участокрах 50—60 çынна списока кĕртмесĕр хăварнă. Ершепуçĕнчи ял Советĕнче 2 участок пулать: çак участоксем валли паянхи куна çитсе те çуртсем уйăрса паман.

Çак çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе сесси решени йышăнса хăварчĕ.

Суйлав литератури иккĕмĕш изданипе тухать

Суйлавçăсем нумай ыйтнине шута илсе, чăвашсен государство издательстви çитес кунсенчех иккĕмĕш изданипе И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕн Конституци проекчĕ çинчен тунă доклада» чăвашла 10.000 экземпляр, И. В. Сталин юлташăн Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче каланă сăмаха чăвашла 20.000 экземпляр пичетлесе кăларать.

Кунсăр пуçне издательство иккĕмĕш изданипе «ССР Союзĕн Верховный Советне суйламалли Положение» чăвашла 25.000 экземпляр, вырăсла 10.000 экземпляр пичетлесе кăларать.

Колхоз суйлав умĕн

Елчĕк районĕнчи колхозсенче СССР Верховный Совет суйлавĕ ячĕпе социализмлă ăмăрту сарăлса пырать. Хĕрлĕ Çырти «Красное знамя» колхозра суйлав законне вĕренме 8 кружок организациленĕ. Колхозниксем суйлава пысăк хастарлăхпа хатĕрленеççĕ. Халĕ çакна май колхозра çуракине хатĕрленес ĕçсем ăнăçлă пыраççĕ. Ялхуçалăх машинисене чылайăшне юсаса хунă. Пурĕ 340 центнер вăрлăх хывнă, халĕ вĕсене сортласа тасатаççĕ. Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçласа, планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 180 пăт тырă, çитес çулшăн аванс шучĕпе 30 пăт аш-какай пачĕ.

Агитаторсем суйлав законне вĕрентес енĕпе тимлĕн ĕçлеççĕ. Политикăллă вĕренĕве ялхуçалăх ыйтăвĕсемпе таччăн çыхăнтарса пыраççĕ.

Колхоз çак кунсенче клуб юсама тытăнчĕ, ăна суйлав кунĕччен туса пĕтереççĕ.

М. ЕГОРОВ.

Ăмăртса ĕçленин вăй-хăвачĕ

СОВЕТСКОЕ. Уйкас-Турайри «Металлист» колхоз районра малта пыракан колхозсен шутĕнче тăрать. Колхоз ялхуçалăх çулне ноябрь уйăхĕнчех вĕçлерĕ. Çапнă тырпула тăккаламасăр, тирпейлĕн турттарса вăрлăх тата ытти фондсене кирлĕ таран тасатса кĕлете хывнă.

Государствăна 452 центнер тырă, 185 центнер çĕрулми памалли плана ытлашшипех тултарнă, Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе чылай тырă панă.

Ялхуçалăх ĕçĕсенче тата авăн çапас ĕçсенче Л. Васильева, А. Архипова, А. Иванов, И. Тимофеев, З. Федорова, О. Михайлова, С. Арсентьева, П. Александров, А. Краснов юлташсем ялан малта пычĕç. Вĕсем кашниех 300—400-шер ĕçкунĕ тунă.

Государствăна кăçалхи çулшăн выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене пĕтĕмпех парса татнă. Çитес çулшăн 7,40 центнер аш-какай, çу, çăмарта чылай панă.

М. СТЕПАНОВА.

Вăрман хатĕрлемелли плана тултарнă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). СССР Верховный Совет суйлавĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртура «Сила» колхоз членĕсем вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. IV-мĕш кварталта колхозăн план тăрăх 430 кубометр вăрман касса хатĕрлемелле тата турттармалла пулнă пулсан, колхозниксем ăна 9 кун хушшинчех тултарчĕç. «Сила» колхоз вăрман хатĕрлевĕн кĕркуннепе хĕллехи сезонри планне те çак кунсенчех тултарать. Вăрман турттарас ĕçре уйрăмăнах В. Димитриев, Ф. Михайлова, П. Киров, Ст. Михайлов, С. Кузьмин, Т. Клементьев, Ф. Васильев, А. Павлов юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем, норма тăрăх кунне виçĕ кубометр турттарас вырăнне, 5-шер кубометр турттараççĕ.

С. ЩАДИН.

„Дружба" колхоз вăрман хатĕрлес ĕçре

СĔРПУ. Уйкас ял Советĕнчи «Дружба» колхоз членĕсем СССР Верховный Советне суйламалли кун тĕлне вăрман касса хатĕрлемелли плана пĕтĕмĕшпех тултарассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Вăрман каснă çĕрте колхоз председателĕ Тимофеев юлташ колхозниксемпе пĕрле хăй ĕçлет.

— Эпĕ те упăшкаран юлмастăп,—тет унăн арăмĕ Тимофеева. Вăл хăй 56 çулта пулин те, ноябрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласах вăрман хатĕрленĕ çĕрте ĕçлет. Председателĕн ĕçри паха примерĕпе ытти колхозниксем те вăрман хатĕрлевĕнче пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Отечественнăй вăрçă инваличĕсем Краснова, Семенов, Ильина юлташсем вăрман хатĕрлевĕнче хăйсен заданине кулленех ирттерсе тултараççĕ. Хальхи вăхăтра Йĕпреç вăрманĕнче «Дружба» колхозран пурĕ икĕ бригада ĕçлет. Вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ, ăмăртура Филиппов комсомолец бригади малта пырать.

Вăрман касакансем валли пурăнмалли лайăх условисем туса панă. Общежитисем ăшă та таса, столовăйра вĕсене виçĕ хутчен апат çитереççĕ, вăхăтра мунча хутса кĕртеççĕ. Кунсăр пуçне, колхоз вăрман касакансене кунне 300-шер грамм аш-какай, 25-шер грамм çу парать, кашни кубометр вутă касшăн пĕрер ĕçкунĕ тÿлет.

IV-мĕш кварталта вăрман касмалли плана колхоз декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарнă.

«Дружба» колхоз «Прожектор» колхозпа ăмăртса ĕçлет.

— Эпир те «Дружба» колхозран кая юлмăпăр. Суйлава вăрман касса хатĕрлемелли плана пĕтемпех тултарнипе кĕтсе илĕпĕр,—теççĕ «Прожектор» колхоз членĕсем.

П. ПАВЛОВ.

Шкул ачисен хĕллехи каникулĕ

Декабрĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа январĕн 10-мĕшĕччен шкулсенче хĕллехи каникул пулать. Каникул кунĕсенче шкул ачисен хăйсен сывлăхĕсене тĕреклетмелле, малашне тата лайăхрах вĕренме çĕнĕ вăй пухмалла. Çавăнпа ачасен канăвне лайăх организацилеме малтанах хатĕрленни кирлĕ.

Республикăри чылай шкулсенчи пионер дружинисен штабĕсемпе комсомол организацийĕсем хĕллехи каникула тивĕçлипе хатĕрленчĕç. Республикăри шкулсемпе пионерсен çурчĕсенче, рабочисен клубĕсенче, кинотеатрсенче çĕнĕ çул елкисем пулаççĕ. Шупашкарти ачасен паркĕнче пысăк та капăр елка пулать. Унта кулленех хаваслă вăйăсем пулмалла. Нумай ачасем çĕнĕ çул ячĕпе парнесем илеççĕ. Çавăн пек парнесене Чăваш АССР Суту-илÿ Халăх Комиссариачĕ енĕпе кăна 16.000 тата Военторг енĕпе 2.000 ытла хатĕрлесе хунă. Шкул ачисемпе пионерсем киносемпе театрсенче, концертсенче пулса культурăллă канаççĕ.

Шупашкарти кинотеатрта январĕн 1-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче ачасен кинофестивалĕ пулса иртет. Фестиваль вăхăтĕнче хулари çамрăксем совет кинематографин чи лайăх произведенийĕсене: «Белеет парус одинокий», «Брат героя», «За Советскую родину», «Лермонтов», «Таинственный остров», «Парад Победы», «Жила была девочка» тата ытти картинăсене те кураççĕ. Кинотеатрта—фойĕре çĕнĕ çул елки пулать. Киносеанссем пуçланас умĕн шкулсенчи художествăллă пултарулăх кружокĕсен выступленийĕсем, массăллă вăйăсем пулаççĕ. Унтах вĕренÿ отличникĕсен фотовыставки пулать.

Шупашкарти пионерсен çуртĕнче шкул ачисемпе пионерсем валли капăр елкăсем тăваççĕ. Декабрĕн 31-мĕшĕнче кунта аслă классенче вĕренекенсен бал-маскарачĕ пулать. Чăвашсен государство академи театрĕн артисчĕсем концерт параççĕ. 1—7-мĕш классенче вĕренекенсем валли, çар çыннисен ачисем валли уйрăм елкăсем пулаççĕ. Елкăра массăллă вăйăсемпе ташăсем, концертсем пулаççĕ, ачасене çĕнĕ çул парнисем параççĕ. Пионерсен çуртĕнчи елкăра каникул вăхăтĕнче пурĕ 6 пине яхăн ача пулмалла. Кунтах хулари шкулсенче вĕренекенсен художествăллă пултарулăх кружокĕсен смотрĕ пулса иртет. Унсăр пуçне январĕн 6-мĕшĕнчен пуçласа январĕн 10-мĕшĕччен ачасен кинофестивалĕ иртмелле. Унта «Небо Москвы», «Однажды ночью», «Старый дворник», «Красная шапочка», «Вратарь», «Дед Мороз» тата ытти кинокартинăсене те кăтартаççĕ.

Чăвашсен академи театрĕн артисчĕсем каникул вăхăтĕнче шкул ачисем валли «Волки и овцы», «На бойком месте», «Замужняя невеста», «Кушар» тата «Сказка» пьесăсене лартса параççĕ. Государство филармони артисчĕсем каникул вăхăтĕнче кашни кун икшер концерт параççĕ. Пуканесен театрĕ çĕнĕ программăпа постановкăсем парать. Нумай шкулсенчи ачасем Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе, литературăпа искусство работникĕсемпе тата республикăри паллă çынсемпе тĕл пулса калаçаççĕ. Хăшпĕр шкулсенче çамрăк шахматистсен турнирĕсене ирттереççĕ.

Пирĕн ачасем физкультурăпа спорта питех те юратаççĕ. Хĕллехи каникул вăхăтĕнче пур катоксемпе стадионсенче те шкул ачисем пулаççĕ. Шупашкарта, Канашра, Улатăрта тата ытти хăшпĕр районсенче те ачасем валли ятарласа катоксем тунă. Катоксем çинче çĕнĕ çул ячĕпе шкул ачисен карнавалĕсем, массăллă вăйăсем пулаççĕ. Каникул вăхăтĕнче республикăри пур шкулсенче те йĕлтĕрпе лайăх çÿрес тĕлĕшпе ăмăрту пулса иртет. Аслă классенче вĕренекенсем комсомолецсемпе профсоюзсен йĕлтĕр кроссне хутшăнаççĕ. Нумай шкулсенчи вĕренекенсем йĕлтĕрпе 5, 10 тата 15 километрлă похода кайма хатĕрленеççĕ. БГТО тата ГТО значокĕсен хĕллехи нормисене параççĕ. Хоккейла выляканесен командисем пĕр-пĕринпе тĕл пулса выляççĕ. Хуласенчи çамрăк йĕлтĕрçĕсем çывăхри ялсене кайса СССР Верховный Советне суйлама мĕнле хатĕрленнипе паллашаççĕ, колхозсенчи çамрăксемпе тĕл пулса калаçаççĕ.

Хĕрачасен Шупашкарти 3-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнче вĕренекенсем каникул вăхăтĕнче ал ĕç кружокĕсенче тĕрлĕ ĕçсем тума палăртнă. Аслăрах классенче вĕренекенсем «Туслăхпа юлташлăх» темăпа диспут ирттереççĕ. Литература кружокĕнче «Тимур и его команда» кĕнекене сÿтсе-яваççĕ, ĕлĕкхи музыкăпа живопись çинчен доклад итлеççĕ.

Арçын ачасен Шупашкарти 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнче вĕренекенсем картинăсен галлерейине экскурсие каяççĕ. Нумай вĕренекенсем пăшалпа персе тата йĕлтĕрпе çÿресе БГТО, ГТО значокĕсен нормисене пама хатĕрленеççĕ.

Йшлей районĕнче пур шкулсенче те çĕнĕ çул елкисем пулса иртмелле. Аслă классенче вĕренекенсем, 10—15 çынран йĕлтĕр командисем туса, декабрĕн 31-мĕшĕнче район центрне пуçтăранаççĕ. Кунта йĕлтĕрпе хăвăрт çÿрес тĕлĕшпе ăмăрту пулать. Каçхине çамрăксем вăтам шкулта пулакан бал-маскарада хутшăнаççĕ. Кунта 150 çамрăк ытла пухăнмалла.

ВЛКСМ Улатăр хула комитечĕ хулари шкул ачисемпе пионерсем валли çĕнĕ çул елкисем, бал-маскарадсем ирттерет. Комсомол райкомĕ шкул ачисемпе пионерсен районри слетне ирттерме палăртнă. Хулари шкулсенче вĕренекенсем йĕлтĕрçĕ ăмăртусем ирттереççĕ.

Вăрçă хыççăнхи хĕллехи каникул кунĕсем савăнăçлă та хаваслă иртмелле. Тăрăшса вĕреннĕ хыççăн ачасем лайăх канса, лайăхрах вĕренме вăй пухмалла.

Н. МИНИН.

ССР Союзне индустриализацилес политика çĕнтерни

(Партин XIV-мĕш съезчĕ пулнăранпа 20 çул тултарнă май)

Пирĕн совет государстви хăй аллинче кучухнехи мĕн тери хăватлă индустрие тытса тăнине çак иртнĕ вăрçă лайăх кăтартса пачĕ. Тăшман пирĕн çĕршыва хирĕç çав тери пысăк çар илсе килчĕ. Фашистла çарсене Германири хăйĕнчи вăйлă аталаннă промышленность кăна мар, çавăн пекех Франципри, Бельгири, Чехословакири тата Европăри нимĕçсем оккупацилеиĕ ытти çĕршывсенчи промышленность та хĕçпăшалсемпе боеприпассем парса тăнă. Йывăр вăрçă пынă тата промышленноçа хĕвеланăçĕнчен эвакуацилеиĕ вăхăтрах социализмлă промышленноçăн тăшмана хирĕç йывăр та тан мар кĕрешĕве тухма тиврĕ. Çав кĕрешӳрен пирĕн промышленность чыслăн çĕнтерсе тухрĕ.

Хĕрлĕ Çар чи лайăх танксем, артиллерипе ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем, боеприпассем, тĕрлĕ снаряженипе тумтирсем ытларан та ытларах илсе тăчĕ. Тăшман танксемпе самолетсен, минометсемпе автоматсен хисепĕ тĕлĕшпе вăйлăрах пулнине вăрçă пынă вăхăтра эпир çĕнтерме пултартăмăр. Пирĕн вăрçă техникин пахалăхĕ яланах нимĕçсенинчен малта тăнă.

Хĕрлĕ Çарăн техникăллă вăй-хăвачĕ ӳссе пынине курса, совет çыннисем вăрçă вăхăтĕнче çапла калатчĕç: «Эпир Сталинла пилĕкçуллăх планĕсене пурнăçа кĕртни—пирĕншĕн мĕн тери пысăк телей! Сталин юлташ пире социализмлă индустриализаци çулĕне ертсе кайни — мĕн тери пысăк телей!» тетчĕç.

* * *

Пирĕн çĕршыва çăлса хăварнă социализмлă индустриализаци çинчен каланă чухне, эпир Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн XIV-мĕш съезчĕ сине çавăрнса пăхатпăр. Çав съезд пирĕн парти историне «Индустриализаци съезчĕ» пулса кĕрсе юлчĕ. Çирĕм çул каярах Сталин юлташ çав съездра ССР Союзне индустриализацилемелли, пирĕн çĕршыва аграрлă çĕршывран промышленноçлă çĕршыв туса хумалли, экономика тĕлĕшпе кая юлнă çĕршывран экономика тĕлĕшпе никама пăхăнман хăватлă çĕршыв туса хумалли программăна сутатса панă. «Хамăрăн çĕршыва аграрлă çĕршывран индустриллĕ çĕршыв туса хурасси, хăйĕн вăйĕсемпех кирлĕ оборудовани тума пултаракан çĕршыв туса хурасси,—акă мĕнре ĕнтĕ пирĕн ĕçĕн тупсăмĕ, пирĕн генеральнăй линин никĕсĕ»,—тенĕ Сталин юлташ çав съездра.

Партин XIV-мĕш съезчĕ 1925 çулăн вĕçĕнче (декабрĕн 18-мĕшĕпе 31-мĕшĕ хушшинче) пулса иртнĕ. Çав вăхăт тĕлне хамăр халăх хуçалăхне, тĕнчери пĕрремĕш вăрçăпа тата ют çĕршыв интервенцийĕпе арканса юлнăскерне, юсаса ура çине тăратас ĕç вĕçленсе пынă. Ялхуçалăхĕ вăрçăчченхи (урăхла каласан, 1913 çулчченхи) шая çити ӳссе çите пуçланă, шултăра промышленность вăрçăчченхи продукцин тăватă пайĕнчен виçĕ пайне яхăн туса кăларма тытăннă. Социализм халăх хуçалăхĕнче пуç пулса тăрасси çирĕпленсе пынă.

Халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратас ĕç вĕçленсе пынă. Анчах вăрçăчченхи виçе таран ӳссе çитнипе лăпланса ларма пулнă-и-ха? Çук, апла лăпланса ларма юраман! Вăрçăчченхи шай вăл — кая юлнă, чухăн çĕршывăн шайĕ пулса тăнă. Халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратнă хыççăн та вăл экономика тĕлĕшĕнчен халсăр çĕршыв, аграрлă çĕршыв пулнă: пĕтĕм продукцин виçĕ пайĕнчен икĕ пайне ялхуçалăхĕ парса тăнă, промышленность вара—пĕр пайне кăна парса тăнă. Çакăнпа пĕрлех промышленность кая юлнăскер пулнă; йывăр индустри, тĕрĕссипе, пирĕн пулманпа пĕрех.

Парти умне пирĕн çĕршыв малашне мĕнле çулпа аталанса пырас ыйту тăччăн тухса тăнă. Çакă вăл Совет Союзĕнчи социализм кунçулĕ çирки тăракан ыйту пулнă. Ленин уйрăмăн илнĕ пĕр çĕршывра социализм тума май пурри çинчен вĕрентнине Сталин юлташ пур енĕпе те малалла çутатса аталантарчĕ. Сталин юлташ партипе халăха ССР Союзĕнче социализм тума мĕн кирли пурте пуррине кăтартса пачĕ. Анчах чи малта тăракан хăватлă индустрисĕр социализмлă общество тăвасси çинчен, империалистла тискер кайăксем ССР Союзне тапăнас пулсан, вĕсемпе ăнăçлăн кĕрешесси çинчен шухăшламалли те пулман.

Кучухнехи йывăр индустрие—топливо, энергетика, металлурги, машиностроени, хими индустрине туса хурсан тин промышленноçăн ытти мĕнпур отраслĕсене те, çĕрĕçĕпе транспорта, Хĕрлĕ Çарпа Флота техника тĕлĕшĕнчен хĕçпăшаллантарма май пулнă.

Ленинпа Сталин çулĕпе çинчен партие зиновьевецсем аяккалла тĕртсе яма хăтланнă. Партин XIV-мĕш съездĕнче зиновьевецсем большевизмăн программăллă установкисене хирĕç, пирĕн çĕршывра социализм тăвассине хирĕç, рабочисемпе хресченсен союзне хирĕç тăнă.

Зиновьевецсен, çав витĕрех куранса тăракан маскăсем тăхăннă троцкистсен, капитулянтла линине тăра шыв çине кăларса, Сталин юлташ çакна кăтартса пачĕ: зиновьевецсен сулĕ пролетариатăн диктатурине хавшатасси патне, рабочисемпе хресченсен союзне хавшатса пĕтерсе лартасси патне илсе пынипе кăтартса пачĕ. Троцкистла-бухаринла сутăнчăксем пирĕн çĕршыв кая юлнине ĕмĕрлĕхе çапла хăварма, ССР Союзне капитализмла системăн аграрлă тăтăкĕ туса хума хăтланнă. Çакă вăл пирĕн Тăван çĕршыва капитализмлă государствăсем экономика тĕлĕшĕнчен чура туса хурассине пĕлтернĕ пулнă пулĕччĕ. Ăçта илсе çитернĕ пулĕччĕ-ха çавăн пек политика? Çав политика вăл Совет Союзĕ капитализмлă йĕри-тавралăх умĕнче хĕçпăшалсăр тăрса юласси патне илсе çитернĕ пулĕччĕ. Халăх тăшманĕсен ирĕр ĕмĕчĕсенче мĕнле хăрушлăх пытанса тăнине ăнланса илес тесен, хамăра-хамăр пĕр ыйту пани те çитĕнĕклĕ: «Пирĕн çĕршыв хĕçпăшалсăр тăрса юлнă пулсан, тĕнчери иккĕмĕш вăрçăра ăна мĕнле кунçул кĕтсе тăнă пулĕччĕ-ха?»

* * *

Халăхăн пĕтĕм ĕмĕчĕсемпе хăватне пĕр тĕллев тавра—ССР Союзне экономика тĕлĕшĕнчен никама пăхăнман, хуçалăхăн мĕнпур отраслĕсемпе культурăна çӳле çĕклеме пултаракан вăйлă индустриллĕ держава туса хурас, социализмлă общество туса хурас, тулашран вăрçăпа килсе тапăнас пулсан, хăйне хӳтĕлеме пултаракан вăйлă индустриллĕ держава туса хурас тĕллев тавра пĕтĕçтермелле пулнă. Сталин юлташ партин XIV-мĕш съездĕнче тунă доклад партипе рабочи класăн, мĕнпур ĕççыннисен шухăшне çĕршыва социализмлă индустриализацилес çулпа ячĕ те ĕнтĕ.

ССР Союзне индустриализацилессишĕн çирĕп тăрса, Сталин юлташ партипе халăха политикăна теори тĕлĕшĕнчен хĕçпăшаллантарчĕ, кĕрешӳ тĕллевне кăтартса пачĕ, ĕç программине туса пачĕ.

Чи малта тăракан промышленноçа май килнĕ таран кĕскерех срокеенче туса хумалла пулнă. Сталин юлташ çапла каларĕ: экономика тĕлĕшĕнчен вăйлă аталаннă буржуаллă государствăсенчен 50—100 çула кая юлнине пирĕн вунă çул хушшинче утса тухмалла, терĕ. Лару-тару хăй çавăн пек хăвăрт утма хушнă: белогвардеецсемпе интервентсене пирĕн халăх граждан вăрçинче çапса аркатнă хыççăн çĕнтерсе илнĕ мирлĕ пурнăç мĕн чухлĕ вăхăта тăсăлассине ун чух никам та пĕлмен-ха.

Çав тери аслă та хăватлă индустрие чи кĕске срокеенче тума нумай средство кирлĕ пулнă. Капиталистсем хăйсен çĕршывĕсене индустриализацилеме средствăсем ăçтан илсе тăнă-ха? Вĕсем рабочисемпе хресченсене пĕр хĕрхенмесĕр пусмăрланă, вăрă-хурахла вăрçăсем вăрçнă, колонисенчи халăхсене çаратнă. Социализмлă государство çавăн пек таса мар майсемпе уса курма пултарайман. Патша правительстви заводсем тума ют çĕршывсенчен кивçен илнĕ, çав парăмсем вĕсем пурте ĕççыннисен çурăмĕ çине тиеннĕ. Совет правительстви çак майпа та усă курма пултарайман. Çапла вара пĕр çулпа кăна—хамăрăн вăйсемпе укçа-тенке перекетлес çулпа, социализмлă накоплени çулĕпе кăна юлнă.

Октябрьти революци пирĕн çĕршывра капиталистсемпе помещиксенчен производство средствисене туртса илчĕ; çĕр, фабрикăсемпе заводсем, рудниксем, банксем, транспорт тата ытти те государство харпăрлăхĕ, урăхла каласан, пĕтĕм халăх пурлăхĕ пулса тăчĕç. Çавна пула индустрие аталантармалли социализмлă накоплени хăватлă çăлкуçĕ çуралчĕ. Государство промышленноçĕ, транспорт, банксем, суту-илӳ—шалти тата тулашри суту-илӳ—паракан тупăшсем халĕ ĕнтĕ капиталистсен харампырла класĕн кăсйине мар, вĕсем пĕтĕмпех индустрие вăйлантарас ĕçе кайнă. Индустри тума пĕтĕм халăхăн тĕп интересĕсем хушса тăнă. Çакна та манмалла мар: патша кивçен илсе тултарнă парăмсене Совет влаçĕ пăрахăçа кăларчĕ. Совет влаçĕ пуличчен çав парăмсене ĕççыннисен тӳлесе тăмалла пулнă. Çав парăмсем вĕсем питех те пысăк пулнă, процентсем тӳлесе кăна ют çĕршывсене çĕршер миллион тенкĕ ылттăн кайса тăнă.

Малалла. Çĕре помещиксем тытса тăрассине пĕтерсе, Совет влаçĕ хресченсене вĕсем уйчен çулсерĕн тара илнĕ çĕрсемшĕн çур миллиард тенке яхăн тӳлесе тăрассинчен хăтарчĕ. Çав йывăрлăхран хăтăлса, хресченсем государствăна промышленность тăвас ĕçре пулăшакан пулчĕç. Индустри тăвас ĕç хресченсен интересĕсемпе килĕшӳллĕ пулнă, мĕншĕн тесен хресченсем промышленноçран тракторсем, ялхуçалăх машинисем, химилле удобренисем тата ытти тĕрлĕ продукци те кĕтсе тăнă.

Çĕршыва индустриализацилени государствăн оборона вăй-хăватне тĕреклетессине, çапла вара халăхăн революцире çĕнтерсе илнисене çирĕплетсе хăварассине, совет стройне тĕрекелетессине пĕлтернĕ. Çĕршыва индустриализацилени çĕршыва экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен чечекленесси патне, пĕтĕм халăхăн пурнăç ырлăхĕпе культурăлăхĕ тăтăшах ӳссе пырасси патне илсе пынă.

Большевиксен партийĕ политикăллă тата организаторла ĕç туса пынипе пула, халăх массисем вĕсен ĕçĕн хисепĕпе пахалăхĕ, вĕсем вăй хурса ĕçлени хăйсен пурнăç ырлăхне ӳстерме, индустри валли средствăсем пухас ĕçе ăнăçлă туса пыма май панине ăнланса илнĕ. Миллион та миллион çынна савăрса илнĕ социализмлă ăмăрту ССР Союзне экономика тĕлĕшĕнчен урăхлатса йĕркелемелли сталинла аслă плансене халăх мĕн тери пысăк хавхаланупа йышăнса илнине тата çав плансене мĕн тери хастарлăн пурнăçа кĕртсе пынине кăтартса пачĕ. Индустри тума кирлĕ çавăн пек çăлкуçсем, çавăн пек вăйсен пуян резервĕсем, паллах, социаллă тата нациллĕ пусмăрлăх пуç пулса тăракан çĕршывсенче çук тата пулма та пултараймаççĕ.

* * *

Индустриализаци çулĕпе çăмăл çулпа пулман. Тăшмансем партие йывăрлăхсемпе хăратма пăхнă. Сталин юлташ партин XIV-мĕш съездĕнче тунă докладра çапла каланă: «Эпир йывăрлăхсенчен хăракан çынсем мар. Йывăрлăхсенчен тармалла мар, йывăрлăхсене хирĕç каймалла, вĕсене çĕнтермелле, çавăнпа эпир большевиксем те, çавăнпа пире Ленин тупнтаса çирĕплетнĕ те», тенĕ.

Халăх парти хыççăн, хăйĕн аслă çулпуçĕ тата учителĕ Сталин юлташ хыççăн кайрĕ. Малтанах пур çĕрте те — апат-çимĕçре те, шкулсем тĕлĕшпе те, мануфактура тĕлĕшпе те перекетлеме тиврĕ. Пирĕн индустри тума укçа-тенкĕ пухмалла пулнă. Ленин—Сталин партийĕ организацилесе тата хавхалантарса пыракан ĕççыннисем пур йывăрлăхсене те хăйсен ирĕкĕпе тӳснĕ, вĕсем хăйсем тӳссе ирттернĕ йывăрлăхсем çывăх вăхăтрах çăмăллăх кӳрессине пĕлсе тăнă.

Çулран çул ытларах та ытларах промышленность предприятийĕсем строя кĕрсе пынă. Ялхуçалăхне тракторсемпе комбайнсем, тĕрлĕ ялхуçалăх ĕçхатĕрĕсем йышлăн пырса тăнă. Социализмлă индустри аталанса пынипе пула, ялхуçалăхне коллективизацилемелли тата класс пулса тăракан кулаксене пĕтермелли материальнăй база пулса тăчĕ. Кулак пусмăрĕнчен хăтăлнă ĕçхресченĕсем пуян механизациллĕ колхозсем туса хучĕç, çакă вăл ялти пуян та культурăллă пурнăçăн никĕсĕ пулчĕ. Çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçне техника тĕлĕшĕнчен урăхлатса йĕркеленĕ. Транспорта урăхлатса çĕнетнĕ тата аслăлатнă. Халăхăн пултарулăх ĕçне шанчăклă хураллаçа тăракан Хĕрлĕ Çар кучухпехи чи малта тăракан çар техникине туянчĕ.

Ĕлĕк кая юлнă наииллĕ республикăсенче кучухнехи шултăра промышленность туса хунă. Çакă вăл ССР Союзĕнчи халăхсем хушшинче пĕртанлăх туса хурас, вĕсен тăванла туслăхне çирĕплетес ĕçре тататклă вырăн йышăнчĕ.

Эпир ĕçсĕрлĕхе пĕтертĕмĕр. Çĕнĕ хуласем ӳссе ларчĕç, киввисем çĕнелсе пычĕç. Вунăшар пин çĕнĕ шкулсем, çĕршер аслă шкулсем, пиншер больницăсемпе санаторисем, кану çурчĕсем туса лартни, ача сачĕсем массăллăн усни. Çĕнĕ клубсем, театрсемпе библиотекăсем нумайшарăн усни, рабочисемпе служащисен ĕçукçине ӳстерни, колхозниксен тупăшĕсем ӳсни, çаксем вĕсем пурте сталинла пилĕкçуллăхсене çĕнтерӳллĕ пурнăçа кĕртнин результачĕсем пулса тăчĕç.

Социализмлă индустриализаци пирĕн çĕршывăн сăн-сăпатне тĕпренех улшăнтарчĕ. Экономика тĕлĕшĕнчен кая юлнă тата ытти çĕршывсене пăхăнса тăракан çĕршывран пирĕн Тăван çĕршыв экономика тĕлĕшĕнчен никама пăхăнман индустриллĕ те колхозлă хăватлă держава пулса тăнă. Отечественнăй вăрçă пуçланнă тĕле Совет Союзĕн йывăр индустрийĕ 1914 çулта пулнă кивĕ Россия индустрийĕнчен 15 хут пысăкрах ӳссе çитнĕччĕ. Совет машиностроенийĕ 1941 çулта туса кăларнă продукци патша Российĕ тĕнчери пĕрремĕш вăрçа кĕрес умĕн туса кăларнă продукцирен 50 хут нумайрах пулчĕ.

Пилĕкçуллăх планĕсене çĕнтерӳллĕн пурнăçа кĕртнипе пула, ССР Союзĕнче эксплоататорла классене пĕтерсе тăкнă, этеме этем пусмăрлассине пĕтернĕ. Пирĕн çĕршывра социализм çĕнтерсе чапа тухрĕ. Пирĕн халăх совет стройне пула, коммунистсен партийĕ аслă та çирĕп ертсе пынипе пула тунă аслă çĕнтерӳсене Сталинла Конституцире закон йĕркипе çирĕплетсе хăварнă.

Пилĕкçуллăх планĕсене пурнăçа кĕртнĕ вăхăтра халăхăн анлă массисем политикăпа культура тĕлĕшĕнчен ӳсрĕç, организаторла тата техникăлла опыт туянса пуянланчĕç, малта тăракан техникăпа вĕренсе алла илчĕç, ăна çаплах малалла вăйлатса пычĕç, кирек мĕнле йывăрлăхсене те çĕнтерме вĕренсе çитрĕç, парти политики пире пĕр пăркаланмасăр ăнăçусем патне ертсе пынине ăнланса илчĕç.

Çакă вăл пире чи йывăр вăрçа тӳссе ирттерме тата гитлерла Германие çапса аркатма пулăшрĕ.

Ултавлă та ирсĕр тăшман хăй пулнă вырăнсенче хуçалăха хăрушла пиçĕлтерсе хăварчĕ. Фашистла нимĕç захватчикĕсем пиншер хулапа яла аркатса тата çунтарса пĕтерчĕç, промышленноçăн 30 пин предприятине ытла пĕтерсе тăкрĕç е сиенлесе хăварчĕç, 100 пин колхоза яхăн çаратса, вăрласа пĕтерчĕç. Нимĕçсем пиçĕлтернĕ хуçалăха юсаса ура çине тăратма сахал мар вăй кирлĕ пулать. Анчах пирĕн малта тăракан хăватлă промышленность, техникăллă пуян опыт пур. Çавсене эпир сталинла пилĕкçуллăхсене пурнăçа кĕртнĕ вăхăтра туянтăмăр. Сталинла пилĕкçуллăхсем пире вăрçăра çĕнтерме пулăшрĕç. Вĕсем пире хальхи йывăрлăхсене те çĕнтерме май паракан никĕс пулса тăраççĕ. Ленин — Сталин партийĕ ертсе пынипе, эпир çак çывăхри пилĕкçуллăхрах нимĕç оккупацине тӳссе ирттернĕ районсенчи халăх хуçалăхне пĕтĕмĕшпех юсаса ура çине тăратăпăр, хамăрăн экономикăна вăрçă хыççăн урăхлатса йĕркелессине ăнăçлăн пурнăçа кĕртĕпĕр. Çав ĕçсене туса, ССР Союзĕн халăх хуçалăхĕ вăрçăчченхи виçерен нумай вăйлăнрах аталанса малалла кайĕ.

Н. МОР.

„Демократиллĕ çĕнĕ Европа пичĕ çинчи чи ирсĕр пăнчă"

«СТАР» ХАÇАТ ФРАНКО ПУÇ ПУЛСА ТĂРАКАН ИСПАНИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Испанири партизансен ĕçĕсем çинчен пĕлтернĕ май «Стар» хаçатăн редакцийĕ çапла çырать: «Испани халĕ те демократиллĕ çĕнĕ Европа пичĕ çинче чи ирсĕр пăнчă пулса тăрать. Пĕр Испанире кăна ĕнтĕ, тата кăштах Португалире, çынсем фашизма хирĕç уççăн тухса калама шикленеççĕ. Ытлашши нумай вăхăт хушши çак икĕ çĕршыв Германин, Италин тата Австрин влаçа çухатнă пуçлăхĕсем-интриганĕсем валли хӳтĕ пристань пулса тăнă. Франко фалангине пĕтерсе хуни çĕнтерӳллĕ 1945 çула тивĕçлĕн вĕçлени пулса тăнă пулĕччĕ».

ИБАРРУРИ ФРАНКОНА ХИРĔÇЛЕ БЛОК ТУМА ЧĔНСЕ КАЛАНИ

ПАРИЖ, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Тулузăран илнĕ хыпарсем тăрăх, Испанири коммунистсен партийĕн генеральнăй секретарĕ Долорес Ибаррури Испанин эмиграпири мĕнпур паллă деятелĕсем патне сыру янă. Çав сырура вăл Испани партийĕсемпе обществăллă организацийĕсен Франкона хирĕç кĕрешекен анлă блокне туса хума чĕнет. Çак кунсенче Тулузăра Испани компартийĕн центральнăй комитечĕн пленумĕ пулса иртнĕ. Çав пленум Франкона хирĕç кĕрешекен мĕнпур çынсене пĕрлештерекен правительство туса хума кирли çинчен каланă.

ФРАНКО ГЕНЕРАЛĂН ÇĔНĔ МАНЕВРĔСЕМ

ПАРИЖ, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Мадридран илнĕ хыпарсем тăрăх, Франко, Испанири тĕрлĕ йышши католиксем пулăшнипе, социаллă-христианла текен парти организацилеме тытăнать. Франко шухăшĕпе, çак парти унăн режимне самаях тĕрек парса тăмалла. Иезуит орденĕн пысăк представителĕсенчен пĕри Анхель Эррера çĕнĕ парти организацилес-си çинчен папăпа калаçма Рима тухса кайнă. Эррера Римран Брюсселе тата Парижа тухса каять. Унта вăл Бельгипе Франции ют çĕршыв ĕçĕсен министерствисемпе, çавăн пекех тата çав çĕршывсенчи католиксен руководителĕсемпе çыхăну йĕркелесе ярас тĕлĕшпе ĕçлеме шутлать.

«ФЕРМАН» ХАÇАТ ИРАН АЗЕРБАЙДЖАНĔН НАЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ĔÇĔСЕМ ÇИНЧЕН

ТЕГЕРАН, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 10-мĕшĕнче пичетленсе тухнă номерта «Ферман» хаçат Иран Азербайджанĕнчи лару-тăру çинчен çапла çырать: çĕршывра пур çĕрте те йĕркелĕх курăнать. Унта пурăнакан çынсем каланă тăрăх, Азербайджанри çулсем çинче хаяхăçанхинчен те лăпкăрах. Çĕнĕ правительство азербайджан чĕлхипе учебниксем кăларас ĕç çине уйрăмах тимлĕн пăхать. Правительство резиденцине кашни кунах халăхăн тĕрлĕ сийĕсен нумай представителĕсем пыраççĕ, вĕсем правительствăна пĕр пулса ĕçлеме хăйсем хатĕр тăни çинчен калаççĕ.

АНГЛИПЕ ФРАНЦИ ЛЕВАНТ ÇĔРШЫВĔСЕМ СИНЧЕН ТУНĂ КИЛĔШĔВЕ ЛИВАН ПАРЛАМЕНЧĔН ЛАРĂВĔНЧЕ СӲТСЕ-ЯВНИ

БЕЙРУТ, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Ливан парламенчĕн ларăвĕнче Англипе Франци Левант çĕршывĕсем çинчен тунă килĕшĕве сӳтсе-явнă. Ларура ют çĕршыв ĕçĕсен тата напи çутĕçĕн министрĕ Фланжье тата нумай депутатсем сăмах тухса каланă. Вĕсем пурте çапла шутлаççĕ: çакă вăл Ливанăн никама пăхăнмасăр пурăнмалли йĕркине тата унăн суверенитетне уссăнах пăсни пулать, вăл Пĕрлешнĕ напписем йышăннă постановленисене хирĕç пырать, тессĕ. Хабиб Аби Шахла депутат çапла каланă: «Англипе Францин пире хăйсен аллинче тытса тăма право çук. Сан-Францискăри конференци йышăннă постановленисем Англипе Франци тунă килĕшĕвĕн вăйне йăлтах пĕтереççĕ. Ливан та, Сири те опекăра тăмаççĕ. Çапла ĕнтĕ, вĕсен шалти тата тулашри ĕçĕсене кам та пулин пырса хутшăнасси синчен сăмах та пулма пултараймасть. Пирĕн никама пăхăнмасăр пурăнмалли йĕркене пăснипе хирĕç протестлес пулать. Пĕрлешнĕ напписен уставне пурнăçа кĕртме ыйтас пулать».

Хабиб Аби Шахла сăмахне саламласа, депутатсемпе хăнасем пурте вăйлăн алă çупнă.

ИНДОНЕЗИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио пĕлтернĕ тăрăх, Индонези президенчĕ индонезиецсен хĕçпăшаллă вăйĕсем хӳтĕлекен районсене американецсен комиссине пырса курма чĕннĕ, унти лару-тăрăва вырăнта курса пĕлĕр, тенĕ.

Ассошиэйтед Пресс агентстви Батавирен пĕлтернĕ тăрăх, американецсен хăшпĕр корреспонденчĕсем çав районсене курса çӳренĕ. Вĕсем пĕлтернĕ тăрăх, индонезиецсен пуçлăхĕсене халăх çав тери пысăка хурса хисеплет, вĕсене вырăнти тĕрлĕ халăхсем пурте пулăшаççĕ. Америка корреспонденчĕсем çавăнти пур районсем тăрăх та хĕçпăшаллă хуралсăрах çӳренĕ, вĕсем союзниксен тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕсенче те пулнă. Корреспондентсем çапла пĕлтереççĕ: Батави районĕнче çапăçусем çав-çавах пыраççĕ.

ЯВА УТРАВĔ ÇИНЧИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Индонези националисчĕсен пуçлăхĕсем Ява утравĕ тăрăх курса çӳренĕ хыççăн Батавие таврăннă. Вĕсемпе пĕрле пулнă корреспондентсем çапла пĕлтереççĕ: Шарир правительствине Индонези халăхĕ вăйлăн пулăшса тăрать. Корреспондентсем пуринчен ытла çакăнтан хытă тĕлĕннĕ: Индонезири халăхçен хĕрарăм организацийĕсем питĕ вăйлă, вĕсенче тăракан хĕрарăмсен йышĕ те питĕ пысăк. Çавăн пекех тата Шарир правительствине вырăнти князьсемпе султансем те пулăшса тăраççĕ. Премьер-министр Шарир декабрĕн 25-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ: Ява утравĕ çинчи Япони çарĕсене хĕçпăшалсăрлантарма, çавăн пекех тата тыткăна лекнĕ çар çыннисене тата лагерьсенче тытса усранă европеецсене хăйсен тăван çĕршывне куçарма индонезиецсен хĕçпăшаллă вăйĕсем ытлашшипех çитесçĕ, тенĕ.

США ШАЛТИ ĔÇСЕН МИНИСТРĔ ГАВАЙ УТРАВĔСЕНЕ ШТАТ ТУСА ХУРАССИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентстви корреспонденчĕ Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, шалти ĕçсен министрĕ Икес Пĕрлешӳллĕ Штатасене Гавай утравĕсене США-и 49-мĕш штачĕ туса хума чĕннĕ. Нумаях пулмасть Икес çапла кăтартса панăччĕ: эпĕ Гавай утравĕсене кĕске вăхăтрах штат туса хумалла тесе калаÇтăн мар, мĕншĕн тесен вăл утравсен экономикине пилĕк пуян çемье контроллесе тăрать, тенĕ. Çапла пулсан та хăйĕн юлашки заявленийĕнче вăл çапла каланă: Гавай утравĕсене штат туса хурсан, унти халăх федеральнăй правительство пулăшнипе çав ыйтусене ăнăçлăн татса пама пултарĕ, тенĕ.

Гавай утравĕсене США 1898 çулта йышăннă, 1900 çулта вара вĕсене «территориллĕ статут» панă. Гавай утравĕсем çинче хальхи вăхăтра 500.000 çынна яхăн пурăнать.

Конгресс Гавай утравĕсене штат туса хума хатĕрленет. Представительсен палатипе сенатăн хăшпĕр членĕсем çитес уйăхра Гавай утравĕсем çине кайса килме шутлаççĕ.

АМЕРИКĂН ПАРИЖ РАЙОНĔНЧИ ÇАРĔСЕН ЙЫШĔ

ПАРИЖ, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн халĕ те Париж районĕнче тăракан çарĕсенче 35.000 çын шутланса тăрать. Американецсемпе французсен тĕрлĕ йышши пулăшакан группиcене те (Америка командованине пăхăнса тăраканнисене) шутласан, Америкăн Париж районĕнчи çарĕсен йышĕ 100.000 çынна çитет.

ТРУМЭНĂН КОНГРЕСА ЯНĂ ÇЫРĂВĔ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Президент Трумэн конгреса çыру янă. Çав çырура вăл тинĕс министерствипе çар министерствине пĕрлештерсе наци оборонин министерстви туса хума ыйтать. Трумэн конгресран тата пурне те çар ĕçне вĕрентмелли программăна йышăнма ыйтать.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕНЧИ ЗАБАСТОВКĂСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат çапла пĕлтерет: ĕç министерстви шутласа тухнă тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче ноябрь уйăхĕнче çĕнĕрен 35 забастовка пуçланса кайнă, вĕсене 105.000 рабочи хутшăннă. Чи вăйлă забастовкăсем çаксем: «Дженерал Мотор» предприятийĕсенчи забастовка, Питтсбург хулинчи кĕленче тăвакансен забастовки, Сан-Франциско районĕнчи машинистсен забастовки тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен сурçĕр-хĕвеланăçĕнчи вăрман касакансен забастовки.

Япони парăннăранпа декабрĕн 21-мĕшĕччен Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче 1.650 забастовка пулнă, вĕсене мĕн пурĕ 1.550.000 рабочи хутшăннă.

Республика тăрăх

Клавдия Евграфова Пĕпреçри «Красный строитель» промартельре формовщипа пулса ĕçлет. Вăл çуллахи вăхăтра норма тăрăх кунне 700 кирпĕч туса кăларас вырăнне 1200 кирпĕч туса кăларнă. Евграфова юлташ артелĕн правлени членĕнче тăрать, комсомолецсемпе çамрăксен бригадине ертсе пырать.

Хальхи вăхăтра вăл СССР Верховный Совет суйлавĕсем ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, вăрман хатĕрлевĕнче хăйĕн нормине кулленех 200 процента çити тултарса пырать.

Ӳкерчĕк çинче: «Красный строитель» промартельри çамрăк стахановка-формовщица **Клавдия Евграфова.**

ÇĔНĔ ЦЕХ

Сĕнтĕр районĕнчи «Кожевник» артелĕ Жданов ячĕпе тăракан колхозра атă-пушмак цехĕ уçнă. Кунсăр пуçне ку артель ут таврашĕсем тăвакан виçĕ бригада организациленĕ. Çав бригадăсем колхозсем тăрăх çӳресе ут таврашĕсем тăваççĕ тата киввисене юсаççĕ.

КОЛХОЗ ÇАМРĂКĔСЕН КАÇХИ ШКУЛĔ

КУСЛАВККА. Куснарти 7 çул вĕренмелли шкул çумĕнче колхоз çамрăкĕсене вĕрентмелли каçхи шкул уçнă. Шкулта 6 класс—2-мĕш класран пуçласа 7-мĕш класа çитиччен организациленĕ. Çав классенче пурĕ 67 çын вĕренет. Çамрăксем уроксене пĕр сиктермесĕр çӳреççĕ.

КОЛХОЗ ШКУЛА ПУЛĂШАТЬ

Комсомольски районри «Красный восток» колхоз Хирти Выçлинчи пуçламĕш шкул валли 45 кубометр, кашни учитель валли 7-шер кубометр вутă турттарса панă.

ÇĔНĔ ГИДРОЭЛЕКТРОСТАНЦИ

КӲКЕÇ. «Рыкша» тата «Красная Армия» колхозсем кăçал Йăшшу шывĕ çинче хăйсен вăйĕпе гидроэлектростанци лартрĕç. Гидроэлектростанци мĕнпурĕ 500 точкăна çутă пама пултарать. Станци вăйĕпе арман авăртма, çăм таптарма т. ыт. ĕçсене те тума пулать. Халĕ армансене хатĕрлесе çитернĕ. Гидроэлектростанци çак кунсенче ĕçлеме тытăнчĕ. Малтанлăха вăл 30 киле çутă пачĕ. Станци суйлав участокĕсене те çутă парать.

П. ТОРОНЕЙ.

ÇИЛ ВĂЙĔПЕ УСА КУРАÇÇĔ

ШĂХАСАН. Энтриял ял Советĕнчи «Герой» колхозра Хĕрлĕ Çартан аманса таврăннă колхозник П. Семенов юлташ хăйĕн килĕнче çил вăйĕпе ĕçлекен ултă вольтлă электростанци лартса хăйĕн çуртне çутатмалла тунă. Çитес кунсенчех вăл икĕ лампăллă радиоприемник лартать.

КАШКĂРСЕНЕ ПĔТЕРЕÇ

Кашкăр колхозсен тата колхозниксемпе уйрăм хуçалăхра пурăнакан хресченсене пысăк сиен кӳрекен тискер кайăк. Çавăнпа та вĕсене ытларах пĕтерме тăрăшмалла.

Кашкăр тытакан сунарçăсене хавхалантарас шутпа кăçал çĕнĕ йĕрке тунă. Кашкăр вĕлерсе унăн тирне «Заготживсырье» конторине панă сунарçа 300 тенкĕлĕх тĕрлĕ таварсем параççĕ. Кашкăр тирне панă çын, тĕслĕхрен, çакăн пек таварсем илме пултарать: 1,5 килограмм сахăр, 600 грамм супăнь, 150 грамм чей, 300 грамм табак, 9 килограмм краççын, 15 килограмм тавар, 6 метр пусма тавар, калуш, носки, спп, 60 тенкĕлĕх спичка, çăнăх, кĕрпе тата ытти апат-çимĕçсем те параççĕ.

Районри «Заготживсырье» конторисен тир илекен магазинĕсенче асăннă таварсем яланах çителĕклĕ.

Кашкăрсене ытларах пĕтерессишĕн кашни çынăн тимлĕн ĕçлемелле.

П. СТЕПАНОВ.

ÇĔНĔ УЧЕБНИКСЕМ

Чăвашсен Государство Издательстви пуçламĕш шкулсем валли çакăн пек çĕнĕ учебниксем кăларчĕ:

А. С. Отачкин—Чăваш чĕлхин грамматики, II-мĕш пайĕ, 2-мĕш класс валли. Тиражĕ 20.000 экземпляр, хакĕ 75 пус.

Г. А. Кореньков — Вырăс чĕлхине вĕренмелли учебник, 3-мĕш класс валли. Асăннă учебник вырăсла тухнă. Унăн тиражĕ 15.000 экземпляр, хакĕ 2 тенкĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалăх пайĕн—3-98, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 1-23.

НЕ 00112 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Тираж 16.000 экз.